Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

25 (7665) № ✻ Юн кун, 2009 ҫулхи мартӑн (пуш) 25-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Паян – Культура ӗҫченӗн кунӗ

## Кӗнекепе туслӑ пулма вӗрентеҫҫӗ




Сӑн ӳкерчӗкре эсир районти ачапӑча библиотекинче вӑй хуракан Татьяна Васильевна Шурнеева библиотекаре, библиотека заведующине Елена Ивановна Налимована тата Марина Михайловна Скворцова методиста куратӑр. Кунта кашни пыракана ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илеҫҫӗ вӗсем, май пур таран пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ.

*Библиотекӑна ҫӳрекенсем сахалах мар, 2140 ҫын ытла. Вӗсен шутӗнче Муркаш шкулӗнче вӗренекенсем те, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем те, учительсем те, шкул ҫулне ҫитмен ачасем те... Ҫывӑхри ытти ялсенчен ҫӳрекенсем те сахал мар.*

*Информаци технологийӗ анлӑ аталаннӑ тапхӑрта хӑшсен шучӗпе кӗнекесемпе усӑ курасси чакса пырать. Кунта вӑй хуракансен шучӗ вара ку тӗлӗшпе пачах расна. Кӗнеке яланах пӗлӳсен ҫӑл куҫӗ пулнӑ, малашне те ку ҫаплах юлӗ. Библиотекӑра кӑна мар, вырӑнсене (шкулсене, ача сачӗсене) тухса та тӗл пулусем, уроксем, викторинӑсем, конференцисем т. ыт. те сахал мар ирттереҫҫӗ библиотека ӗҫченӗсем. Кунпа пӗрлех шкулсене, шкул ҫулне ҫитмен ача-пӑча учрежденийӗсене методикӑлла пулӑшу парас тӗлӗшпе те пысӑк калӑпӑшлӑ ӗҫ туса ирттереҫҫӗ.*

В. ШАПОШНИКОВ
сӑн ӳкерчӗкӗ.

**КУЛЬТУРӐН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ!**

Сире професси уявӗпе чӗререн саламлатӑп!

Сирӗн пултаруллӑ ӗҫ пурнӑҫӑн тапхӑрӗсене сыпӑнтаракан сыхӑ пулса тӑрать, вӑл чӑннипех те хисепе тивӗҫ. Хӑвӑрӑн тивӗҫе чыслӑ пурнӑҫланӑ май эсир ҫынсенче пултарулӑхпа ӑшпиллӗхе аталантаратӑр, историпе халӑх традицийӗсене, культурӑпа искусствӑна юратма вӗрентетӗр. Общество нравственность тата ӑс-хакӑл хаклӑхӗсене упрассинче сирӗн витӗм пысӑк.

Эсир ответлӑха туйнипе, пусӑрулӑ пулнипе тата чун хавалӗпе тӑрӑшнипе республикӑра ирттерекен ҫутӑ уявсемпе культура акцийӗсем йӑлана кӗрсе пыраҫҫӗ, вӗсене ырласа йышӑнаҫҫӗ. Коллективсемпе вӗсен членӗсем халӑх пултарулӑхне Раҫҫей шайӗнче кӑна мар, чикӗ леш енче те анӑҫлӑ кӑтартаҫҫӗ. Пӗрремӗш наци «Нарспи» мюзиклӗ тата ытти хайне евӗр сцена ӗҫӗсем Чӑваш Енӗн пурнӑҫне анлӑн ҫутатма май парӗҫ. Вӗсенче ӗмӗрхи йӑла-йӗркесемпе традицисем кун ҫути курасҫӗ.

Инноваци ҫулӗсене суйласа илни отрасльте палӑрӑмлӑ ҫитӗнӳсем тума май парать. Ҫак вӑхӑта республикӑра тӗслӗх библиотекӑсем 500 ытла. Халӗ вара эпир татах пысӑк пӗлтерӗшлӗ задачӑна пурнӑҫа кӗртме тытӑнтӑмӑр. Пирӗн ялсенчи клубсене ҫӗнетсе улӑштармалла, вӗсене культурӑн чӑн-чӑн вучахӗсем туса хумалла.

Хӑвӑрӑн професие чунтан парӑннишӗн, ырми-канми вӑй хунишӗн, ҫынсене хавас кӑмӑл тата ӑшӑ туйӑм парнелеме пултарнишӗн сире тав сӑмахӗ калатӑп. Сире ҫирӗп сывлӑх, творчество ӗҫӗ-хӗлӗнче ӑнӑҫу, ырлӑх-сывлӑх, телей тата юрату сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчӗ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛӖ КУЛЬТУРА ӖҪЧЕНӖСЕМ,**
**ҪАК СФЕРӐН ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире хӑвӑрӑн профессии уявӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Эсир хамӑр халӑхӑн культурине, ырӑ йӑли-йӗркине сыхласа хӑварса малалла аталантарассишӗн тӑрӑшатӑр. Районта пурӑнакансем пушӑ вӑхӑта усӑллӑ тата интереслӗ ирттерччӗр тесе ҫине тӑратӑр.

Юлашки ҫулсенче эсир ҫӗнӗлле ӗҫлени куҫ умӗнчех. Районти 30 тӗслӗх библиотекӑра ял ҫыннисен хайӗн тавракурӑмне аталантармалли пӗтӗм майсем пур. Халӗ вара культура учрежденийӗсене ҫӗнетсе вӗсене база культура ҫурчӗсем туса хурас енӗпе тимлетӗр. Кӑҫал Ҫӗр ӗҫченӗн тата Ҫамрӑксен ҫултталӑкӗ пулни сире хӑвӑрӑн яваплӑхӑра татах та ӳстерме хистет. Ялa пур енлӗн пуянлатма тӗллев лартатпӑр пулсан, халӑх фольклорне, пултарулӑхне, ҫынсен ӑс-хакӑлне аталантарассипе татах та ытларах тӑрӑшмалла. Ҫитӗнекен ӑрӑва чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑли-йӗркине тӗпе хурса воспитани парассинче сирӗн ӗҫӗр те пӗлтерӗшлӗ пулнине асра тытмалла. Пултарулӑхӑрпа ӗҫшӗн ҫунса тӑни ҫӗнӗлӗхсене пурнӑҫа кӗртме хавхалантарса пычӑр.

Сире малалла та хӑвӑрӑн тивӗҫӗре чун-чӗре хушнӑ пек пурнӑҫлама ырлӑх-сывлӑх, ӑнӑҫу, телей сунатӑп. Ҫемйӗрсенче яланах килӗшӳпе ӑнлану, тулли пурнӑҫ пулччӑр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

Ыйту – хурав

## Транспорт налукӗ пиркиех

***Федераллӑ налук службин Чӑваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мӗш номерлӗ инспекцийӗ 2009 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче транспорт налукӗ тӳлес ыйтупа «Тӳрӗ лини» акци ирттерчӗ. Ҫавна май налук тӳлекенсем телефон урлӑ хӑйсене интереслентерекен кирек епле ыйту ҫине те хурав илме пултарчӗҫ. Ытларах тӗл пулакан ыйтусем ҫаксем.***

**Ыйту: – Автомашинӑна, сӑмахран, УАЗ автомашинӑна ҫӑмӑл транспорт шутне кӗртнӗ чухне мӗне тӗпе хураҫҫӗ-ха: категорие-и, модель номерне-и е т. ыт. те?**

**Хурав:** – РФ Налук кодексӗпе килӗшӳллӗн Раҫҫей Федерацийӗн законодательствипе регистрациленӗ пулсан пур автомашинӑсемшӗн, мотоциклсемшӗн, мотороллерсемшӗн, автобуссемшӗн, ытти хӑй тӗллӗн пневматикӑллӑ майпа тата гусеницӑпа ҫӳрекен машинӑсемпе механизмсемшӗн, самолетсемшӗн, вертолетсемшӗн, теплоходсемшӗн, яхтӑсемшӗн, парусллӑ кимӗсемшӗн, катерсемшӗн, юр ҫийӗн ҫӳремелли техникӑшӑн, мотоҫунасемшӗн, моторлӑ кимӗсемшӗн, гидроциклсемшӗн, хӑйсем тӗллӗн ҫӳремен (кӑкарса ҫӳремелли) тата ытти шыв тата сывлӑш транспорт хатӗрӗсемшӗн те транспорт налукне тӳлес пулать.

Налук ставки транспорт хатӗрӗн категорийӗнчен килет. Калӑпӑр, ҫӑмӑл автомашинӑсемпе груз турттармалли автомашинӑсен вӑл тӗрлӗрен.

Раҫҫей Финанс министерствинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, транспорт хатӗрӗшӗн тӳлемелли налук виҫине палӑртнӑ чухне транспорт хатӗрӗн паспорчӗнче 3-мӗшпе 4-мӗш йӗркесене кӑтартнӑ даннӑйсене шута илмелле.

Транспорт хатӗрӗн паспорчӗн «3. Наименование (тип ТС)» йӗркинче транспорт хатӗрне хаклани пур: «Легковой», «Автобус», «Грузовой-самосвал, -фургон, -цементовоз, -кран» т. ыт. те.

Ҫавӑнпа та транспорт налукӗн виҫине палӑртнӑ чухне транспорт хатӗрӗн типне тата вӑл мӗн валли пулнине шута илеҫҫӗ. Ӑна вара транспорт хатӗрӗн паспорчӗнче палӑртнӑ.

**Е. АРСЕНТЬЕВА, налук инспекцийӗн налук тӳлекенсемпе, вӗсене регистрацилес тата учета илес енӗпе ӗҫлекен пайӗн пуҫлӑхӗ.**

Ҫур аки умӗн

**Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче мартӑн 15-мӗшӗ тӗлне ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем мӗн чухлӗ хатӗрленине кӑтартни (процентпа)**
**1. Дизель топливи хатӗрленӗ. 2. А-76 бензин хатӗрленӗ.**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 48,1 | 0 |
| «Волга» ООО | 45,0 | 50,0 |
| «Восток» | 22,4 | 85,0 |
| «Герой» | 12,3 | 34,7 |
| Ильич яч. хис. | 52,4 | 15,4 |
| «ВТМ» ООО | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 0 | 0 |
| «Лидер» АФ ООО | 0 | 0 |
| «Моргаушская» | 241 | 93,5 |
| «Оринино» | 272 | 309,1 |
| «Передовик» | 0 | 0 |
| «Свобода» | 53,8 | 39,2 |
| «Сеятель» | 250 | 100 |
| Суворов яч. хис. | 6,7 | 0,7 |
| «Рассвет» АФ ООО | 0 | 0 |
| «Ударник» | 1,5 | 2,5 |
| «Хлебороб» ООО | 0 | 0 |
| Чапаев яч. хис. | 0 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 80 | 200 |
| Мичурин яч. хис. АФ | 20 | 0 |
| «ДаАн» ООО | 14 | 0 |
| **Ял хуҫалӑх пред-пе** | **47,5** | **43,4** |

**Ҫурхи кунсем ҫитсе килни сисӗмлӗрех те сисӗмлӗрех. Апла пулсан ҫур акине те тӗплӗн хатӗрленесси пирки манмалла мар. Ҫавна валли механизаторсен кадрӗсене, паха вӑрлӑх, ял хуҫалӑх техникине юсаса хатӗрленипе пӗрлех ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем пирки те манмалла мар. Анчах та ҫак вӑхӑта уйрӑм хуҫалӑхсенче ку енӗпе лару-тӑру йывӑр пулни шухӑшлаттарать. Ҫак сӑмахсене чи малтанах «ВТМ», «Лидер», Рассвет», «Хлебороб» обществӑсем, Ленин яч. хис., «Передовик», Чапаев яч. хис. хуҫалӑхсем пирки каламалла.**

Тав сӑмахӗ

## Район кӗнеки – район ҫыннисем валли

Кӑҫал эпир Муркаш районне йӗркеленӗренпе 65 ҫул ҫитнине паллӑ турӑмӑр. Ҫавна май районта тӗрлӗрен интереслӗ мероприятисем пулса иртрӗҫ, вӗсем ҫулталӑк тӑршшӗпех пырӗҫ.

Район юбилейӗ Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗпе пӗр килчӗ. Ҫӗр ҫинче ӗҫлекенӗн, ҫӑкӑр ҫитӗнтерекенӗн профессийӗ мӗн тери сумлине, кашнин пурнӑҫӗнче пысӑк пӗлтерӗшлине палӑртас тӗллевпе уяв кунӗ тӗлне «Хвала рукам, что пахнут хлебом» кӗнеке кӑлартӑмӑр. Сӑмах унта район аталанӑвӗшӗн ырми-канми вӑй хунӑ ял ӗҫченӗсем, йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр малаллах ҫитӗнӳсем тӑвакан ял хуҫалӑх предприятийӗсем ҫинчен пырать. Ҫитӗнекен ӑрӑва воспитани парас ӗҫре тивӗҫлӗ вырӑнта ҫак кӗнеке.

Эпир пурте пӗлетпӗр ӗнтӗ: кирек епле пысӑк мероприятие ирттересси, ҫав шутрах кӗнеке кӑларасси те, укҫа-тенкӗпе ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та район кунне ирттерме пулӑшнисене пурне те тав тӑвас килет. Уйрӑм тав сӑмахӗ асӑннӑ кӗнекене кӑларма укҫа-тенкӗ пулӑшӑвӗ панисене: «Муркашри сӗтҫу завочӗ» акционерсен уҫӑ обществи (ертӳҫи В.А. Калинин) – 10000, «Ударник» сӑнавпа производство хуҫалӑхӗ (ертӳҫи П.П. Давыдов) – 10000, Мӑн Сӗнтӗр райповӗ (ертӳҫи Л.П. Майкова)– 7000, Перекет банкӗн Муркашри 7034-мӗш номерлӗ уйрӑмӗн ӗҫченӗсен (ертӳҫи Г.В. Никитин) – 3700, «БТИ» МУП (ертӳҫи – Л.Ф. Николаев) – 1000 тенкӗ. Пӗтӗмӗшле 31700 тенкӗ пухӑнчӗ.

Тепӗр хут пысӑк тав сире пулӑшушӑн. Сирӗн ырӑ кӑмӑл нихӑҫан та ан иксӗлтӗр. Ӗҫӗрсем вара яланах ӑнса пычӑр.

**Р. АНАНЬЕВА,**
**район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ.**

Юбилей

## Саламлатпӑр

Хисеплӗ та хаклӑ ҫыннӑмӑра, савнӑ мӑшӑра, ывӑла, юратнӑ аттене, тарават та пултаруллӑ кукаҫие – Ҫатракасси ялӗнче пурӑнакан **Виталий Яковлевич ФЕДОРОВА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе тулли кӑмӑлпа, чун-чӗрери чи ӑшӑ та ырӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, инҫе ҫул пек вӑрӑм кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал сунатпӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн пуянлӑх, савӑнӑҫ, телей.



Мӗн кӗтни сан ялан пурнӑҫлантӑр,
Сывлӑху пултӑр ҫирӗп чул пек.
Ҫул ҫинче ҫут телей йӑлтӑр култӑр,
Ырлӑх пултӑр сана ӗмӗрех.
Тав туса кӑмӑлушӑн сунатпӑр
Савнӑҫпа ӑнӑҫу тулли лав.
Чун ӑшши хӗвел пек ӑшӑ пултӑр,
Турӑ патӑр мал ӗмӗт, вӑй-хал.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, амӑшӗ, хӗрӗсемпе ывӑлӗ, кӗрӳшӗ, 2 мӑнукӗ, тӑванӗсем.**

Ӑшӑ чунлӑ аттене, ырӑ кӑмӑллӑ кукаҫие, хисеплӗ хӑтана – Ҫатракасси ялӗнче пурӑнакан **Виталий Яковлевич ФЕДОРОВА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Тулӑх пурнӑҫ, ҫирӗп сывлӑх, тулли телей, иксӗлми вӑй-хал, ӑнӑҫупа ҫитӗнӳ сунатпӑр.

Тавах сана, аттеҫӗм, эс пурришӗн,
Кил чысӗпе ҫемьӗ ӑшши пулнишӗн.
Татах та нумай ҫул эс пурӑнсам,
Пире пит лайӑх эс ҫумра пулсан.

**Саламлаканӗсем: Алинӑпа Слава, Кириллпа Егор тата тӑхлачи.**

## Иккӗмӗш ҫур ҫул валли ҫырӑнтараҫҫӗ

**Хаклӑ вулакансем! Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата иккӗмӗш ҫур ҫулта илсе тӑма унчченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 191 тенкӗ те 70 пус.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**